## Милици хроникинчен

# Кинемей кама чăрмантарнă?

Çын ĕмĕрĕ питĕ кĕске. Çитменнине тата юлашки çулсенче «çава йăтса çӳрекен» ватти-çамрăккине пăхса тăмасть, пурне те пуçтарса каять. Çавăнпа та пирĕн хушăра нумай пурăнакансем пурришĕн (вĕсем нумайăн мар пулин те) савăнмалла çеç пек те....

Анчах та Катькасри пĕр ватă кинемей такама питĕ чăрмантарнă курăнать. 85 çула пуснă карчăк хăйĕн пурнăç сукмакĕпе вĕçне çити утса тухаймасть: пурнăç тăршшĕне кĕскетекен тупăнать. Ватă çын хăй вилĕмĕпе вилменнине пӳртри стена çине сирпĕннĕ, типсе тĕксĕмленнĕ юн тумламĕсем те, çамки çинче суран пулни те палăртать. Криминалистсем следствие пулăшма пултаракан япаласене тата пӳрнесен йĕрĕсене илнĕ ĕнтĕ.

Çакнашкал усал ĕç тунăшăн явап тыттарассине Раççей Федерацийĕн Уголовнăй кодексĕн 105 статйин 1 пайĕнче пăхса хунă. «Раскольниковăн» хăйĕн пурнăç тĕллевĕ пирки шутланă чух ăна шута хума тиветех.

# Кĕтмен хăна

Кăнтăр кунĕнчех Ильинка ял тăрăхĕнчи Хыркассинче пурăнакан кинемей патне кĕтмен хăна пырса кĕрет. Ватă çын вара «урамра» пурнăç кунран кун улшăнса пынине тата иртен-çӳрен усал шухăшлă пулма пултарнине шутламан çав вăхăтра. Палламан çынна пӳрте иртме сĕнсе пысăк йăнăш тунине кайран тин ăнланать сăпайлă та ырă кăмăллă хĕрарăм. Кил хуçин шанăçне кĕрсе 15 пин тенкĕ вăрлать те çак çуллă чĕлхеллĕ кукăр алă, алăка тул енчен хупса тухса каять. Укçине вара кинемей тепĕр кунне çеç шутласа пăхать.

Çапла çав, паянхи пурнăçра пӳтсĕрсем, ĕçлемесĕр укçаллă пулас текенсем ватă çынсен айванлăхĕпе усă курма тăрăшаççĕ. Тĕрлĕ майсемпе улталаса, вĕсем ватăсене çурăк валашка умне лартса хăвараççĕ. Тимлĕрех пулмалла. Палламан çынна «ырă туни» хăвăра сиен кӳме пултарнине манмалла мар.

# Тимĕр шăршине те туйнă

Темиçе çул каялла çынсемшĕн ĕç вырăнĕ шутланнă çуртсем халĕ пушă ларни, паллах, чунра лăпкă туйăм хăварма пултараймасть. Апла пулин те вĕсем сахал мар.

Иртнĕ кунсенче акă милици сотрудникĕсем пирĕн районти пĕр хуçалăхри малтан ферма пулнă çуртран тимĕр таткисем вăрланă икĕ арçынна тытса чарнă. Вăрăсемшĕн çурта кĕрсе тухасси йывăрах пулман – вăл пушах пулнă-çке-ха. Ăна питĕрессине вырăнта кирлĕ тесе шутламан пулас. Инçетре пурăнакан «вăрăм сăмсаллисем» çакăнта килсе тимĕр шăршине сисессине те.

Вăрнар поселокĕн «паттăрĕсем» 16 тимĕр таткишĕн кăна килнĕ пулнă-ши Муркаш тăрăхне? Ăна вара следстви татса парĕ.

**Пичете районти шалти ĕçсен пайĕн материалĕсем тăрăх хатĕрленĕ.**

## Çул çитменнисен ыйтăвĕсемпе

# Кашни çыннăн тимлĕхĕ кирлĕ

Районти шалти ĕçсен пайĕнче çул çитменнисемпе ĕçлесси кăçалхи çул пĕлтĕрхинчен те ытларах тимлĕх ыйтать. Мĕншĕн тесен вĕсем йĕркене пăснă тĕслĕхсем пĕлтĕр палăрмаллах нумай пулчĕç – 28 (преступленисен шучĕ малтанхи çулхинчен икĕ хута яхăн пысăкрах).

Çулталăк пуçланчĕ кăна пулин те, пĕр çул çитмен çамрăк вара преступлени тума ĕлкĕрчĕ те. Муркашри вăтам шкулта вĕренекен арçын ача ют çыннăн килĕнчен кĕсье телефонне вăрланипе палăрчĕ. Паллах, ăна учета илнĕ. Пĕтĕмĕшле вара февралĕн 1-мĕшĕ тĕлне районти шалти ĕçсен пайĕнче учетра 42 çамрăк тăрать, вĕсенчен 27-шĕ – шкулта вĕренекенсем. Çавăнпа та çулталăкăн пĕрремĕш уйăхĕнчех пирĕн сотрудниксем районти вĕрентӳ учрежденийĕсенче право ыйтăвĕсемпе пурĕ 11 тĕл пулу ирттернĕ.

Нумай пулмасть «Условник» операцие пурнăçлани те профилактика ĕçĕн тепĕр енĕ шутланать. Çамрăксем нумайăн пухăнакан вырăнсене те ятарлă рейдсемпе 6 хутчен тухнă. Çул çитменнисем йĕркене пăсасси ытларах чух çемьери лару-тăрупа çыхăнса тăрать. Çавăнпа та районти йывăр лару-тăруллă çемьесене тăтăшах тухса çӳрессине те йăлана кĕртнĕ ĕнтĕ.

Профилактика ĕçĕ пирки каланă чух обществăлла воспитательсем пуррине те аса илтерес килет. Вĕсенчен ытларахăшĕ – ял тăрăхĕсен депутачĕсем. Хăйсене «шанса панă» ачана вĕсем кашни кун тенĕ пекех кураççĕ. Калаçмасăр иртмелле мар, ачан пурнăçĕпе кăсăкланни ытлашши никамшăн та пулмĕ. Ялти Культура çурчĕсен ĕçченĕсен те каçхи мероприятисем ирттернĕ вăхăтра унта пуçтарăннисем хушшинче çул çитменнисем пуррипе çуккине пĕлсе тăмалла. Атту саккуна пăхăнман тĕслĕхсемшĕн явап тытмасăр пулмасть.

Йĕркене пăснăшăн административлă протокол çырни тăрăх штраф тӳлесси те – явап тыттарассин тепĕр енĕ. Çул çитменнисен аллипе «кăвар туртакан» аслисем те çук мар. Акă иртнĕ уйăхра ачасемпе (!) пĕрле эрех-сăра ĕçнĕшĕн пĕр çынна кăна мар штраф тӳлеттерме протокол çырнă. Хăйсен ачисене тивĕçлĕ воспитани паманнисем те сахал мар районта. Милици сотрудникĕсем çине тăнипе çеç инçех каяймăпăр пулĕ. Çемьесенче тимлĕх ытларах кирлĕ, йĕркене пăснă тĕслĕхе курсан вара, манăн ача мар-ха тесе, курмăш пулас марччĕ.

**М. КОНУЗИНА,**
**районти шалти ĕçсен пайĕн çул çитменнисемпе ĕçлекен уйрăмăн пуçлăхĕн ĕçĕсене вăхăтлăх туса пыраканĕ.**

## Уява халалласа

# Ĕнерхи йывăрлăх – паянхи ырлăхшăн

Февраль уйăхĕ вĕçленичченех районти библиотекăсенче патриотла литература уйăхлăхĕ пычĕ. Ăна Тăван çĕршыв хӳтĕлевçисен кунне тата Аслă Çĕнтерӳ кунĕ 65-çул тултарнине халалланă.

Муркашри ача-пăча тĕп библиотекинче вара уйăхлăх вăхăтĕнче тĕрлĕ выставкăсем ĕçленипе пĕрлех ĕç ветеранĕсемпе тĕл пулу та иртрĕ. Ĕç ветеранĕ Н.А. Николаева, районти ветерансен канашĕн председателĕ М.В. Виноградова тата Социализмла Ĕç Геройĕ О. Ф. Федорова ачасемпе пĕрле Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи çинчен документла фильм пăхрĕç. Хыççăн ачасене хăйсен аса илĕвĕсемпе паллаштарчĕç. Ялти арçынсене вăрçа ăсатни, колхозра аслисемпе тан ĕçлени – паян та вĕсен куçĕ умĕнчех. Вăрçă хыççăнхи çулсен йывăрлăхĕ шкулта вĕренме кĕнеке-тетрадь çитменнинче, тумтир япăх пулнинче, апат-çимĕçрен те чухăн пулнинче палăрнă.

Паянхи ачасене вара, вăрçă вăхăтĕнче аслашшĕ-асламăшĕсем хăйсен пĕтĕм вăй-халне панăран, савăк пурнăçпа пурăнма майсем çителĕклĕ. Апла пулсан çакăншăн ветерансене яланах тимлĕх уйăрса тав сăмахĕ каласчĕ.

**М. СКВОРЦОВА, библиотека методисчĕ.**

## ГИБДД пĕлтерет

# Тĕрĕслевсем иртеççĕ

Çул-йĕр çинчи хăрушă инкек-синкексене асăрхаттарас тесе районти шалти ĕçсен пайĕн патшалăх çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекци уйрăмĕ тăтăшах тĕрлĕ мероприятисем ирттерет. Акă февраль уйăхĕнче те чылай асăрхаттару операцийĕсене пурнăçа кĕртрĕмĕр.

Инкексем тĕрлĕ сăлтавсене пула сиксе тухаççĕ. Апла пулсан ĕçе те тĕрлĕ енлĕн йĕркелемелле. Çавăнпа та «Ачасем», «Çул урлă каçмалли вырăн», «Автобус» операцисен ячĕсем те тĕрĕслевсенче мĕн çине тимлĕх уйăрассине кăтартаççĕ. Унсăр пуçне тата «Парăмçă» операци иртмелле. Ăна сотрудниксем суд приставĕсемпе пĕрле пурнăçлĕç. Штрафсене вăхăтра тӳлеменнисене явап тыттарĕç. Пысăк тата йывăр тиевлĕ машинăсене тĕрĕслессипе те ятарлă операци пулчĕ.

Анчах та çул çинчи йĕрке пуласси пуринчен те килет: водительсенчен те, çуран çӳрекенсенчен те. Çавăнпа та патшалăх çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекцийĕн ĕçченĕсен асăрхаттарăвĕсене кĕтмесĕрех çул-йĕр правилисене пăхăнасчĕ.

**А. ЩЕРБАКОВ,**
**районти шалти ĕçсен пайĕн патшалăх çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекци уйрăмĕн пропаганда инспекторĕ.**









# Тав тăватпăр

Нискасси ялĕнче пурăннă Меркурий Михайлович Ванюшкина юлашки çула ăсатма пулăшнăшăн, пирĕн пысăк хуйха пĕрле пайланăшăн тăвансене, ялйыша чĕререн тав тăватпăр.

**Ванюшкинсен, Симаковсен, Сторожевсен, Соловьевсен çемйисем.**


Продается мелкий картофель.
Тел.: 8-937-384-10-41. 2-3.

Блоки керамзитобетонные. Дешево.
Тел.: 8-903-358-77-72. 4-8.

Рытье колодцев. Продажа колец (пропаренные) заводские.
Тел.: 8-903-379-09-01. 2-6.

Ĕне, вăкăр, тына, пăру, сурăхсем туянатăп. Тел.: 8-903-063-07-57. 1-2.

Кольца колодезные. Цена 1700 руб. Доставка. Бурение колодцев.
Тел.: 8-906-382-89-14. 1-5.

Бетон, раствор любых марок. Песок, гравмасса, щебень, ЖБИ. Организация доставки. Тел.: 8(8352)52-95-95, 8-927-66-88-778, 8-927-668-84-40. 7-38.


## Пĕлтерӳсем. Объявления


*ООО «Виктория»*
*Режим работы: с 10-ти до 17-ти в рабочие дни.*
*- Оценка имущества, в том числе земельных участков – содействие.*
*- Составление налоговых деклараций и передача по Интернету в ИФНС, ПФ.*
*- Оформление документов для получения имущественных, социальных налоговых вычетов.*
*- Восстановление и постановка бухгалтерского, кадрового учета.*
*- Помощь в регистрации, реорганизации, ликвидации организаций, ИП.*
*- Бизнес-консультации, полное сопровождение бизнеса.*
*Адрес: ЧР, с. Моргауши, ул. Мира, д.6, офис 119;*
*Тел.: (83541) 62-4-43; (8352) 22-10-60; моб.: 446-448.*

Выдаем заём под материнский капитал. Тел: 68-83-33, 8-927-995-03-41. 2-4.

Спутниковые антенны «ТРИКОЛОР» с установкой, гарантией и обслуживанием.
Тел.: 8-905-345-77-19. 6-6.

Ĕне, вăкăр, тына, сурăх туянатпăр.
Тел.: 60-7-10, 8-905-343-60-63. 8-9.

Продаю: кирпич одинарный М-100; М-125; М-150; керамический полуторный М-125; двойной керамический; силикатный белый, желтый; КББ р-р 20х20х40; красный половняк, некондиция, гравмассу, керамзит. Доставка и разгрузка на манипуляторе. Документы.
Тел.: 8-903-358-20-97, 8(8352) 44-20-97. 7-7.

выдаем на выгодных условиях
ЗАЙМЫ
принимаем
СБЕРЕЖЕНИЯ
под достойные проценты
с.Моргауши, ул.Чапаева, 44а/2
6-23-10, 8 927 667-48-92
Св-во гос.рек. 21 № 001329502 от 26.05.04г.
КПКГ “КАПИТАЛ”
работаем с пайщиками

СПУТНИКОВЫЕ АНТЕННЫ «ТРИКОЛОР»
Каждому клиенту – подарок! 4-6.
Тел.: 8-906-385-29-30, 8-960-302-30-52.

Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно.
Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-656-13-84. 1-5.


Участник долевой собственности Борисов Юрий Иванович, 09.05.1953 года рождения, проживающий по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Шатьмапосинское сельское поселение, д. Обрыскино, ул. Молодежная, д. 38, сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности на земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения, местоположение которого: Республика Чувашская, район Моргаушский, сельское поселение Шатьмапосинское, на территории землепользования СПК им. Мичурина, участок расположен в восточной части кадастрового квартала 21:17:281001 площадью 1,23 га пашни для производства сельскохозяйственной продукции.

Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 2 адреса:
1. Администрации Шатьмапосинского сельского поселения.
2. Борисову Юрию Ивановичу, проживающему по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Шатьмапосинское сельское поселение, д. Обрыскино, ул. Молодежная, д. 38.

Участник долевой собственности Яичников Александр Михайлович, 30.09.1960 года рождения, проживающий по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ярабайкасинское сельское поселение, д. Милюдакасы, ул. Колхозная, д. 10, сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности на земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения, местоположение которого: Республика Чувашская, район Моргаушский, сельское поселение Ярабайкасинское, на территории землепользования СХПК «Дружба», участок расположен в западной части кадастрового квартала 21:17:121301 площадью 1,28 га пашни для производства сельскохозяйственной продукции.

Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 2 адреса:
1. Администрации Ярабайкасинского сельского поселения.
2. Яичникову Александру Михайловичу, проживающему по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ярабайкасинское сельское поселение, д. Милюдакасы, ул. Колхозная, д. 10.

Участник долевой собственности Яичников Михаил Семенович, 19.11.1934 года рождения, проживающий по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ярабайкасинское сельское поселение, д. Милюдакасы, ул. Колхозная, д. 10, сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности на земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения, местоположение которого: Республика Чувашская, район Моргаушский, сельское поселение Ярабайкасинское, на территории землепользования СХПК «Дружба», участок расположен в западной части кадастрового квартала 21:17:121301 площадью 2,56 га пашни для производства сельскохозяйственной продукции.

Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 2 адреса:
1. Администрации Ярабайкасинского сельского поселения.
2. Яичникову Михаилу Семеновичу, проживающему по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ярабайкасинское сельское поселение, д. Милюдакасы, ул. Колхозная, д. 10.

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды, категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:271401:972, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Юськасинское сельское поселение, участок расположен в юго-восточной части кадастрового квартала 21:17:271401, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 5939 кв. м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.

Коллектив Управления Пенсионного фонда в Моргаушском районе Чувашской Республики – Чувашии выражает глубокое соболезнование специалисту Управления Клоповой Людмиле Геннадьевне в связи с кончиной отца
**ЖОРЖИКОВА**
**Геннадия Георгиевича.**

Кашмашри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкул коллективĕ кунта ĕçлекен Е.М. Соловьевăн ашшĕ
**Меркурий Михайлович**
**ВАНЮШКИН**
пирĕнтен ĕмĕрлĕхех уйрăлса кайнă пирки унăн çемйипе тата çывăх тăванĕсемпе пĕрле тарăннăн хурланса пĕлтерет.

СПК-племзавод «Свобода» правленийĕ
**Геннадий Георгиевич**
**ЖОРЖИКОВ**
пенсионер вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата çывăх тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.

Çатракассинчи «Березка» ача сачĕн коллективĕ кунта заведующи пулса ĕçлекен Р.Г. Шапошниковăн ашшĕ
**Геннадий Георгиевич**
**ЖОРЖИКОВ**
вилсе кайнă пирки çемйипе тата çывăх çыннисемпе пĕрле чĕререн хурланса пĕлтерет.


Моргаушская районная газета «Çĕнтерӳ ялавĕ»

УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ» Минкультуры Чувашии.

Главный редактор А.И. ТИХОНОВ.
АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9А.
ТЕЛЕФОНЫ: главный редактор - 62-1-36, заместитель главного редактора - 62-2-82, бухгалтерия - 62-1-35, отделы: общественно-политической жизни - 62-2-82, экономики и социальной жизни - 62-1-38. Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru.

Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору в сфере связи, информационных технологий и массовых коммуникаций по Чувашской Республике – Чувашии. Свидетельство о регистрации ПИ № ТУ 21-00073 от 07 декабря 2009 года.

Объем 1,5 усл. печатных листа.
Рукописи не рецензируются и не возвращаются, объемом более 2 стр. не принимаются.
Редакция не несет ответственности за содержание рекламных объявлений.

ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.
Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.
Дежурный по номеру Белов А.П.
Номер подписан 26.02.2010 г.
Время подписания в печать: по графику – 17 час. 20 мин, фактическое – 17 час. 20 мин.
Заказ Тираж 3950.

Номер набран и сверстан в РГУ «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.